ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН РЕФЕРЕНДУМĔ ÇИНЧЕН" САККУННЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ВЫРĂНТИ РЕФЕРЕНДУМ ТАТА ДЕПУТАТА, ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХĂН СУЙЛАВЛĂ ОРГАНĔН ЧЛЕННЕ, ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХĂН СУЙЛАВЛĂ ДОЛЖНОÇРИ ÇЫННИНЕ КАЯЛЛА ЧĔНСЕ ИЛЕС ЕНĔПЕ ИРТТЕРЕКЕН САСĂЛАВ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин референдумĕ çинчен" 2003 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 58 №; 2006, 70 №; 2007, 73 №; 2009, 82 №; 2010, 86 №; 2012, 92 № (I том); "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 10 №; 2014, 12 №; 2015, 5 №; 2016, 11 №; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2023, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 6 статьян 1-мĕш пунктне ", Федераци саккунĕн 10^1 статйин 8-мĕш тата 11-мĕш пункчĕсемпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне" сăмахсем хушса хурас;

2) 13 статьяра:

а) 9^1-мĕш пунктăн иккĕмĕш абзацне "Чăваш Республикин референдумĕн участокри комисси пичетне" сăмахсем хыççăн ", е асăннă копие электронлă майпа туса хатĕрлеме пултараççĕ, ун пек чухне ăна Чăваш Республикин референдумĕн участокри комисси председателĕ, секретарĕ электронлă майпа алă пусса ĕнентереççĕ" сăмахсем хушса хурас;

ă) çакăн пек çырса 11^1-мĕш пункт хушса хурас:

"11^1. Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава ирттернĕ чухне Чăваш Республикин референдумне хутшăнакансен списокĕсене Раççей Федерацийĕн Тĕп суйлав комиссийĕ çирĕплетнĕ йĕркепе туса хатĕрлеççĕ.";

3) 15 статьян 3-мĕш пунктне çакăн пек çырса предложени хушса хурас: "Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава ирттерме Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ Чăваш Республикин референдумĕн участокĕсене туса хума пултарать.";

4) 18 статьяна çакăн пек çырса 6-мĕш пункт хушса хурас:

"6. Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава тивĕçтерме Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ участокри ятарлă комиссисем туса хума пултарать. Çавнашкал комиссисене айăпланма пултаракан çынсене тата айăпланакан çынсене хупса усрамалли вырăнсенче ĕçлекен çынсен шутĕнчен туса хума пултараççĕ, е тата çавнашкал участокри комиссисен полномочийĕсене участокри ытти комиссисене пама пултараççĕ.";

5) 21 статьян 2-мĕш пунктĕнче "1^1-мĕш пункчĕпе" сăмахсене "1^1-мĕш е 1^{2-1}-мĕш пункчĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

6) 38 статьян 9-мĕш пунктне "бюллетеньсем панă" сăмахсем хыççăн "Федераци саккунĕн 64^1 статйипе килĕшӳллĕн дистанциллĕ электронлă сасăлава ирттернĕ тĕслĕхсĕр пуçне" сăмахсем хушса хурас, çакăн пек çырса тăваттăмĕш çĕнĕ предложени хушса хурас: "Ун пек чухне панă бюллетеньсен хисепне Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕн йышăнăвĕпе палăртаççĕ, федераци саккунĕпе урăххине палăртман пулсан.";

7) 43 статьян 2-мĕш пунктне çакăн пек çырса предложени хушса хурас: "Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин

19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава ирттернĕ чухне Чăваш Республикин референдумĕн результачĕсем çинчен калакан протоколта, пĕтĕмĕшле таблицăра çавнашкал сасăлавăн даннăйĕсем пулмалла.".

2 статья

Чăваш Республикин "Вырăнти референдум тата депутата, вырăнти хăй тытăмлăхăн суйлавлă органĕн членне, вырăнти хăй тытăмлăхăн суйлавлă должноçри çыннине каялла чĕнсе илес енĕпе ирттерекен сасăлав çинчен" 2004 çулхи ака уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 2 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 59 №; 2005, 62, 65 №-сем; 2006, 69 №; 2007, 73 №; 2009, 82 №; 2010, 86 №; 2012, 92 № (I том); "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 10 №; 2014, 9, 12 №-сем; 2015, 5 №; 2016, 11 №; 2017, 3 №; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 6-мĕшĕ; 2023, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 6 статьян 1-мĕш пайне ", Федераци саккунĕн 10^1 статйин 8-мĕш тата 11-мĕш пункчĕсемпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне" сăмахсем хушса хурас;

2) 14 статьян 3-мĕш пайне çакăн пек çырса предложени хушса хурас: "Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава тата (е) Федераци саккунĕн 65 статйин 17-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă срокченхи сасăлава ирттернĕ чухне Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ вырăнти референдум участокĕсене туса хума пултарать.";

3) 16 статьян 1-мĕш пайне çакăн пек çырса хурас:

"1. Федераци саккунĕн, çак Саккунăн положенийĕсене пурнăçа кĕртессине тивĕçтерес тĕллевпе Чăваш Республикин патшалăх органĕсем, Чăваш Республикин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, Чăваш Республикин патшалăх учрежденийĕсем тата Чăваш Республикинчи муниципалитет учрежденийĕсем, çавăн пекех вĕсен должноçри çыннисем комиссисене вĕсен полномочийĕсене пурнăçламашкăн пулăшма, сăмахран, вĕсене кирлĕ çурт-йĕре (çурт-йĕре территорири комиссисене тата участокри комиссисене уйăрса панă чухне – комиссисенчен çурт-йĕрпе усă курма тăкаклана укçана тата коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳленĕ укçана саплаштарма ыйтмалла

мар), çав шутра вырăнти референдум документчĕсене (кăтартнă документсене архива париччен е тата саккунпа çирĕплетнĕ упрамалли срок тухсан пăрахăçа кăлариччен) тата участокри комиссисен технологи оборудованине упрама тӳлевсĕр пама, уйăрса панă çурт-йĕре тата кăтартнă документсене тата оборудование хураллассине тивĕçтерме, çавăн пекех транспорт хатĕрĕсене, çыхăну хатĕрĕсене, техника оборудованине тӳлевсĕр уйăрса пама тивĕçлĕ.";

4) 19 статьяра:

а) 1-мĕш пая çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава тата (е) Федераци саккунĕн 65 статйин 17-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă срокченхи сасăлава тивĕçтерме Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ участокри ятарлă комиссисем туса хума пултарать. Çавнашкал комиссисене айăпланма пултаракан çынсене тата айăпланакан çынсене хупса усрамалли вырăнсенче ĕçлекен çынсен шутĕнчен туса хума пултараççĕ, е тата çавнашкал участокри комиссисен полномочийĕсене участокри ытти комиссисене пама пултараççĕ.";

ă) 5-мĕш пайра "1^1-мĕш пункчĕпе" сăмахсене "1^1-мĕш е 1^{2-1}-мĕш пункчĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

5) 38 статьян 10-мĕш пайне "бюллетеньсене панă" сăмахсем хыççăн "Федераци саккунĕн 64^1 статйипе килĕшӳллĕн дистанциллĕ электронлă сасăлава ирттернисĕр пуçне" сăмахсем хушса хурас, çакăн пек çырса виççĕмĕш çĕнĕ предложени хушса хурас: "Ун пек чухне панă бюллетеньсен хисепне вырăнти референдума йĕркелекен комиссин йышăнăвĕпе палăртаççĕ, федераци саккунĕпе урăххине палăртман пулсан.";

6) 39^1 статьяна çакăн пек çырса 13-мĕш пай хушса хурас:

"13. Вырăнти референдума хутшăнакан, айăпланма пултаракан çынсене тата айăпланакан çынсене хупса усрамалли вырăнсенче ларакан çынсен срокченхи сасăлавне Федераци саккунĕн 65 статйипе пăхса хăварнă йĕркепе ирттереççĕ.";

7) 43 статьян 2-мĕш пайне çакăн пек çырса предложени хушса хурас: "Федераци саккунĕн 64 статйин 17-мĕш пункчĕпе тата (е) 66 статйин 19-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă сасăлава тата (е) Федераци саккунĕн 65 статйин 17-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă срокченхи сасăлава ирттернĕ чухне вырăнти референдум результачĕсем çинчен калакан протоколта, пĕтĕмĕшле таблицăра çавнашкал сасăлавăн даннăйĕсем пулмалла.".

3 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хулли
2023 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ
81 №